# ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
# САККУНЕ

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ПАССАЖИРСЕНЕ ТАТА БАГАЖА АВТОМОБИЛЬ ТРАНСПОРЧЁПЕ ТАТА ХУЛАРИ ÇЁР ÇИНЧИ ЭЛЕКТРИЧЕСТВО ТРАНСПОРЧЁПЕ ТУРТТАРАССИНЕ ЙЁРКЕЛЕССИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ*
*2024 çулхи юпа уйăхĕн 8-мĕшĕнче*
*йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче пассажирсене тата багажа автомобиль транспорчĕпе тата хулари çĕр çинчи электричество транспорчĕпе турттарассине йĕркелесси çинчен" 2003 çулхи раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнчи 48 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2004, 58 №; 2006, 70 №; 2008, 76 №; 2009, 83 №; 2011, 91 №; 2012, 96 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7 №; 2015, 5 №; 2016, 6 №; "Республика" хаçат, 2018, раштав уйăхĕн 5-мĕшĕ; 2020, авăн уйăхĕн 30-мĕшĕ; 2021, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2022, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2023, нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕ, утă уйăхĕн 19-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 4 статьяра:

а) $11^1$-мĕш пайăн 5-мĕш пунктĕнче "çĕнĕ хаксем вăя кĕнĕ кунччен 30 календарлă кунран кая юлмасăр" сăмахсене "улăштарнă хаксене усă кур-

ма пуçламалли кунччен 15 кунран кая юлмасăр" сăмахсемпе улăштарас, "вĕсен территорийĕнче чарăну вырăнĕ пур чухне" сăмахсем хушса хурас;

ă) 13-мĕш пайра:

пĕрремĕш абзацра "Федераци саккунĕпе пăхса хăварнă сăлтавсенчен пĕри те пулин йĕркеленнĕ, çавăн пекех çак сăлтавсенчен пĕрне те пулин тупса палăртнă:" сăмахсене "Федераци саккунĕпе пăхса хăварнă сăлтавсенчен пĕри те пулин йĕркеленнĕ." сăмахсемпе улăштарас;

иккĕмĕш–пиллĕкмĕш абзацсем хăйсен вăйне çухатнă тесе йышăнас;

2) 6 статьяра:

а) çакăн пек çырса тăххăрмĕш тата вуннăмĕш çĕнĕ абзацсем хушса хурас:

"муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрут тăрăх, Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсем тăрăх турттарас ĕçе пурнăçласси çинчен калакан свидельствăн дубликатне тата тивĕçлĕ маршрут карттин дубликатне памалли йĕркене палăртать;

Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсем тăрăх тăтăш турттарас ĕçе планламалли документа туса çирĕплетет;";

ă) тăххăрмĕш–вăтăрмĕш абзацсене тивĕçлĕн вун пĕрмĕш – вăтăр иккĕмĕш абзацсем тесе шутлас;

б) çакăн пек çырса вăтăр виççĕмĕш çĕнĕ абзац хушса хурас:

"Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе пăхса хăварнă ытти полномочисене пурнăçлать.";

в) вăтăр пĕрремĕш – вăтăр тăваттăмĕш абзацсене тивĕçлĕн вăтăр тăваттăмĕш – вăтăр çиччĕмĕш абзацсем тесе шутлас;

г) вăтăр пиллĕкмĕш тата вăтăр улттăмĕш абзацсене тивĕçлĕн вăтăр саккăрмĕш тата вăтăр тăххăрмĕш абзацсем тесе шутлас тата вĕсем хăйсен вăйне çухатнă тесе йышăнас;

3) 7 статьяра:

а) вуннăмĕш абзац хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

ă) çирĕм пĕрремĕш абзаца "тăтăш турттармалли тивĕçлĕ маршрутсен карттисене парать тата вĕсене çĕнĕрен çырса йĕркелет," сăмахсем хыççăн "муниципалитетсем хушшинчи тăтăш турттармалли маршрут тăрăх, Чăваш

Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен чиккисенче муниципаллă маршрутсем тăрăх турттарас ĕçе пурнăçласси çинчен калакан свидельствăн дубликатне тата тивĕçлĕ маршрут карттин дубликатне тăратать," сăмахсем хушса хурас;

б) вăтăр виççĕмĕш абзацра "ĕç тăвакан влаçĕн органĕпе" сăмахсене "ĕç тăвакан органĕпе" сăмахсемпе улăштарас;

4) $7^1$ статьян 1-мĕш пайĕн вун çиччĕмĕш абзацне "тăтăш турттармалли муниципаллă маршрутсен карттисене парать тата вĕсене çĕнĕрен çырса йĕркелет," сăмахсем хыççăн "муниципаллă маршрутсем тăрăх тăтăш турттарас ĕçе пурнăçласси çинчен калакан свидельствăсен дубликачĕсене тата тивĕçлĕ маршрутсен карттисен дубликачĕсене тăратать," сăмахсем хушса хурас;

5) $9^1$ статьяна çакăн пек çырса абзац хушса хурас:

"Юридически сăпатăн е уйрăм предпринимателĕн çăмăл такси заказ памалли службăн ĕç-хĕлне пурнăçламалли правăна илесси е çав право вăйра тăнине пăрахăçласси çинчен, çăмăл такси заказ памалли службăн регионти реестрне улшăнусем кĕртесси çинчен, çăмăл такси заказ памалли службăн регионти реестрĕнчен çырса панине илесси çинчен калакан заявленийĕсен тата пĕлтернисен формисене Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ палăртать.".

**2 статья**

1. Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

2. Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче пассажирсене тата багажа автомобиль транспорчĕпе тата хулари çĕр çинчи электричество транспорчĕпе турттарассине йĕркелесси çинчен" 2003 çулхи раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнчи 48 №-лĕ саккунĕн (çак Саккунпа улшăнусем кĕртнĕ) 4 статйин $11^1$-мĕш пайĕн положенийĕсем 2029 çулхи çурла уйăхĕн 31-мĕшĕччен (çурла уйăхĕн 31-мĕшне кĕртсе) вăйра тăраççĕ.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи юпа уйăхĕн 9-мĕшĕ
62 №